25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ИЮЛЬ
10
ЭРНЕКУН
159(6094) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем пĕрлешĕр

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Колхоз кадрĕсене тăтăшах хатĕрлесе пырар

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, пирĕн Чăваш республикинчи колхозсем хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем вăйлă тырпул ÿстерсе ăна пухса кĕртессишĕн, выльăхсен йышне тата продуктивноçне ÿстерессишĕн тăрăшса ĕçлеме сăмах пачĕç. Вĕсем хăйсем панă сăмаха пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Колхозсен уйхирĕсенче вăйлă тырпул ÿсет. Çав тырпула пухса кĕртме тытăнас вăхăт çывхарса çитет. Çывăх вăхăтрах уйхирте хĕрÿ ĕç пуçланмалла. Çапла вара колхозсем умĕнче пысăк ĕç тăрать. Çак ĕçре колхозсенчи кадрсем пысăк вырăн йышănса тăраççĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче колхозсенчи кадрсен йышĕ чылаях улшăнчĕ. Хĕрлĕ Çар ретне кайнисем вырăнне çĕнĕ çынсем тăчĕç. Партипе советсен вырăнти органĕсем колхоз председателĕсене, бригадирсене, машинăпа ĕçлекен кадрсене вĕрентсе хатĕрлеме тăрăшнă пирки пирĕн кадрсем çитменни çуракн вăхăтĕнче сисĕнсех каймарĕ. Ку вара республикăри колхозсем нумайĕшĕ çуракине ăнăçлăн вĕçлениччен те лайăх курăнать.

Тырпула пухса кĕртме пур енчен те лайăх хатĕрленсе çитесси, ăна вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕртесси колхозсенчи кадрсенчен килет. Хăш колхозăн ĕçе пĕлекен кадрсем пур, вăл колхоз хăйĕн умĕнчи ĕçсене вăхăтра туса пырать.

Сăмахран, Елчĕк районĕнчи Сурин-скри «Марс» колхоз çуракине ăнăçлăн ирттернĕ. Унта уйхир ĕçне пысăк пахалăхпа туса пыма вĕреннĕ колхозниксемпе колхозницăсем йышлă. Çавăнпа пĕрлех тимĕрçĕсем, платниксем, шорниксем тата ыттисем те пур. Тырпул пухса кĕртме хатĕрленнĕ май, колхоз килкартинче тимĕрçĕсем машинăсене юсаççĕ, платниксем урапа ещĕкĕсем тăваççĕ, шорниксем хăмăт-пăявсене йĕркелеççĕ. Унти тимĕрçĕ лаççинче ăста тимĕрçĕпе пĕрле тепĕр икĕ-виçĕ çын çĕнĕрен çав ĕçе вĕренеççĕ, вăтă платниксем çумĕнче çĕрарăмсем платник ĕçне вĕренеççĕ, ытти ĕçсенче те çавăн пекех. Çавна пула колхозра ĕçе пĕлекен кадрсем йышланса пыраççĕ. Çав районри Патрекелĕнчи «Осоавиахим» колхозра виçĕ платникпе пĕрле 8 хĕрарăм ĕçлеççĕ, вĕсем платник ĕçне вĕренсе пыраççĕ. Елчĕк районĕнчи Кавалри «Комбайн» колхозра тимĕрçĕ пулман. Машинăсене юсама аякран тимĕрçĕ илсе пынă, унăн патĕнче тимĕрçĕ ĕçне вĕренме комсомолеца Петр Смирнова янă. Смирнов тимĕрçĕ ĕçне тăрăшса вĕренет. Вăл кĕске вăхăт хушшинчех тимĕрçĕ лаççинче ĕçлесе 100 ĕçкунĕ ытла тунă.

Колхоз кадрĕсене хатĕрлесси çинчен каласа, эпир тимĕрçĕсем, шорниксем, платниксем хатĕрлесси çинчен уйрăмах асă мĕншĕн чарăнса тăратпăр: нумай колхозсенче хăйсен тимĕрçĕсем çук пирки жнейкăсене, вересленкăсене тата ытти машинăсене уборкăра ĕçлеме юсаса çитересси вăраххăн пулса пырать, чылай колхозсенче урапасем çитмеççĕ. Кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçленĕ колхозсенче çав ĕçсене пĕлекен çынсем пур, вĕсенче вара тырпула пухса кĕртме те лайăх хатĕрленсе çитнĕ. Çакна шута илсе, пур колхозсенче те кадрсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлемелле.

Тырпула кĕске вăхăтрах пухса кĕртесси комбайнерсем çителĕклĕ пулнинчен, вĕсем хăйсен ĕçне лайăх пĕлнинчен нумай килет. Комбайнерсене курссенче вĕрентнипе пĕрлех уйхир ĕçне тунă çĕрте те вĕрентсе пырас пулать. Кашни комбайнер çумĕнчех çав ĕçе вĕренекен ученик пултăр. Тракторпа ĕçлеме те, жнейкăпа ĕçлеме те çав майпа вĕрентме пулать. Пĕр-пĕр специальноçа шкулта е курсра кăна мар, производствăра та вĕренсе çитме пулать.

Тырпула вăхăтра пухса кĕртме кадрсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла. Малта пыракансен ĕç опытне юлса пыракансене каласа кăтартса, вĕсене те пысăк пахалăхпа ĕçлеме вĕрентмелле.

Выльăх-чĕрлĕх пăхас тĕлĕшпе ĕçлекенсене—конюхсене, скотниксене вĕрентесси çинчен пĕр-икĕ сăмах. Кашни колхозрах выльăха юратса пăхакан колхозниксемпе колхозницăсем пур. Паллах, вĕсене хăйсен пĕлĕвĕсене ÿстерме, зоотехникăпа ветеринарие вĕренме пулăшмалла. Çавăнпа пĕрлех, вĕсен хăйсен те, çамрăк кадрсен, выльăхсене лайăх пăхса ÿстерме вĕрентес пулать.

Пирĕн колхозсенче хăйсен ĕçне ăста пĕлекен кадрсем пулни ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса пыма май парĕ, колхозсем государство умĕнчи обязательствисене вăхăтра пурнăçа кĕртĕç, нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешекен совет воинĕсемпе пĕтĕм çĕршыв валли тырпул, аш-какай тата промышленность валли чĕртавар нумайрах пама

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 8-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июлĕн 8-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Воронежран** хĕвеланăçнерех вырăнта хаяррăн çапăçнă. Вăйлăн пулса иртнĕ çапăçусем хыççăн пирĕн войскăсем **Старый Оскол** хулинчен тухса кайнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн пĕр подводнăй лодка нимĕçсен «Торпиц» ятлă чи çĕнĕ линкорне атакăланă, линкора икĕ торпеда лексе пысăк сиен кÿнĕ.

* * *

Июлĕн 7-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 50 танкне ытла, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 90 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 125 лавне, горючи тултарнă 28 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой артиллерин 2 дивизионне тата зенитнăй артиллерин 7 батарейине пусарса лартнă, горючи складне тата боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине 4 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Баренц тинĕсĕнче нимĕçсен транспортне путарнă тата Финн заливĕнче противникăн транспортне сиенленĕ.

* * *

Воронежран хĕвеланăçнерехри пĕр участокра нимĕçсем атакăна 100 танка ытла кĕртсе янă. Танксен çапăçăвĕ пуçланса кайнă. Çав çапăçура нимĕçсен 40 танкне пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн боецсемпе командирсем тăшманăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç çапăçнă çĕрте питĕ пысăк çирĕплĕхпе геройлăх кăтартаççĕ. Красноармеец Вегаев юлташ противникăн окопне çĕмĕрсе кĕнĕ те ручной граната ывăтса 4 салтака пĕтерсе тăкнă. Нимĕç офицерĕ пирĕн боеца персе вĕлерме хăтланнă, анчах Вегаев ăна штыкпа чиксе вĕлернĕ. Красноармеец Большаков юлташ граната ывăтса станковăй пулемета тата пулеметчикпа офицера пĕтерсе тăкнă. Штык вĕççĕн çапăçса, Большаков юлташ 17 гитлеровеца стройран кăларнă. Пирĕн орудисенчен пĕрин патне нимĕçсен темиçе танкĕ çывăхарса пынă. Наводчик Фаустов юлташ противника çывăха янă та нимĕçсен 2 танкне персе çĕмĕрнĕ. Нимĕçсем Воробьев юлташ командир пулса ертсе пыракан взвода окопсенчен хĕссе кăларма ултă хутчен хăтланса пăхнă. Хастарлă боецсем пĕр утăм та каялла чакман. Çав окопсем патне пымалли вырăнсенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 200 виллине çити выртса юлнă.

* * *

Котырло юлташ командир пулса ертсе пыракан танксен подразделенийĕ (Калинин фрончĕ), виçĕ кун хушши çапăçса, противникăн 15 танкне, танксене хирĕç пемелли 20 тупине тата салтакĕсемпе офицерĕсене темиçе çĕр çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Майор Осмаков командир пулса ертсе пыракан истребительнăй авиачасть сывлăшра пулнă çапăçусенче 4 кун хушшинче 16 «Юнкерса», 4 «Мессершмитт-109» самолета тата 5 «Мессершмитт-109-ф» самолета персе ÿкернĕ.

* * *

Снайпер Федор Чегодаев отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа 240 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Вăл 24 красноармееца питех те тĕл пеме вĕрентнĕ, çав красноармеецсем вара, Чегодаев юлташ ертсе пынипе, 180 нимĕç оккупантне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче противникăн тылĕнче кĕрешекен партизансем нимĕçсен пехоти ларса пыракан поезда тата автомашинăсем турттарса пыракан эшелона ÿпĕнтерсе янă. Совет патриоchĕсем телефонпа телеграф линине 2 километр тăршшĕнче пăснă тата 40 оккупанта пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕсем противникăн çар эшелонне крушени тунă. 38 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Çав отрядсенчи партизансемех противникăн штаб автомашинисене 3 машинăна пĕтерсе тăкнă. 9 нимĕç офицерне тата пĕр генерала, кăкăр çине çакмалли икĕ значокпа тата тимĕр хĕреспе наградăланăскере, вĕлернĕ.

* * *

Румынсен 10-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 3?-мĕш полкăн 7-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Ион Самойла çапла каласа панă: «Нимĕçсем Румынине килсе кĕнĕренпе Румыния хăй ирĕкĕпе пурăнакан çĕршыв пулма пăрахнă. Нимĕçсем хуласемпе ялсене çаратса пĕтернĕ. Хаклă япаласене пурне те Германие илсе каяççĕ. Румыни хресченĕсен хĕл каçма йывăр пулать. Фронта кайнă чухне çул çинче эпĕ темĕн чухлĕ çĕр акăнмасăр юлнине куртăм. Кукурузăна çумкурăксем пусса илнĕ. Çар сучĕсем питĕ хытă айăплаççĕ пулин те, çартан тарса каясси пĕтмест. Манăн ротăран пĕр уйăх хушшинче 30 салтак тарчĕ».

* * *

Боецсен пĕр ушкăнĕ гитлерла ирсĕрсем калама çук тискер ĕçсем туни çинчен акт çырнă. Актра çапла каланă: «Нимĕçсенчен тытса илнĕ блиндажсем патĕнче асаплантарса вĕлернĕ командирсемпе красноармеецсен 18 виллине тупнă. Боецсен аллисене хуçа-хуçа пĕтернĕ, урисене пăра-пăра хунă. Пĕр виле çинче хĕртнĕ йĕрсем темĕн чухлĕ тупнă». Çав акта кĕçĕн политрук Галелей, çар фельдшерĕ Авчурина, красноармеецсем Денисов, Миронов тата Пластинин алă пуснă.

* * *

Франци халăхне сутакансем хăйсен Берлинри хуçисем умĕнче мухтава тухасшăн. Безье хулинче (Франция) полици Германие хирĕçле листовкăсем пичетлекен вăрттăн типографие тупнă. Çав типографие организацилекенсене — 12 çамрăк француза асаплантарса вĕлернĕ. Анчах, апла пулсан та, вăл листовкăсем Безьере çеç мар, ытти хуласенче те çаплах йышлăн саралаççĕ.

* * *

Польша партизанĕсен отрячĕ Германия Совет Союзне тапăнни çултала çитнĕ кун Краковпа Львов хушшинчи чугунçул çинче оккупантсен поездне ÿпĕнтерсе янă. Крушенипе взрывсем пирки çав чугунçул тăрăх поездсем çÿресси пĕр талăка чарăнса ларнă.

Июлĕн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июлĕн 9-мĕш ырăн тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронежран** хĕвеланăçнерех вырăнта çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Воронежран хĕвеланăçнерех вырăнта пирĕн боецсем противникăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç хастарлăн çапăçаççĕ. Халăх пурăнакан икĕ пункт патне пымалли вырăнсенче нимĕçсем пĕр кун хушшинче саккăр хутчен атакăна кайнă, анчах вĕсене кашни хутĕнчех сире-сире янă. Каçхине гитлеровецсен икĕ роти пирĕн позицисене тăххăрмĕш хут атакăлама хăтланнă. Пирĕн боецсем противника çывăха ярса, наступлени тăвакан нимĕçсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Сазонов юлташ командир пулса тăракан чаçри минометчиксем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Боец — пулеметчика Умарова ротăн флангне вырттса противникăн атакисене сирсе пыма хушнă пулнă. Нимĕçсем Умаров выртнă фланга хирĕç часах икĕ ротăна çити пехота янă. Хастарлă пулеметчик тĕл персе тăрса 50 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, вăл резервра тăнă боецсем çăйне пулăшма пыриччен тытăнса тăнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç енчи участоксенчен пĕринче нимĕçсем пирĕн стрелковăй батальон хÿтĕленĕ позицисене тăватă хутчен атакăланă. Çапăçу хирĕнче çĕмĕрнĕ 13 танкĕ тата салтакĕсен 500 ытла вилли выртса юлсан, противник тÿррĕн пырса атакăлас шухăша пăрахнă. Çаврăнса илес хĕрушлăх килсе тухсан çеç пирĕн боецсем, командовани хушнă пăрăх, çĕнĕ рубеж çине чакнă. Тепĕр участокра танксен хаяр çапăçăвĕнче нимĕçсен 19 танкне тата 200 автоматчикне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен часть 5 кун хушшинчи çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Тарасов юлташ командир пулса тăракан чаçри боецсем 4 кун хушшинче нимĕçсен 67 танкне çĕмĕрнĕ тата çунтарса янă, 21 орудине пĕтерсе тăкнă тата пехотăн хĕçпăшалĕнчен персе противникăн 2 самолетне ÿкернĕ. Çав участокра нимĕç войскисен 1.000 салтакĕпе офицерĕ ытла вилсе выртнă.

* * *

Немцевич юлташ командир пулса ертсе пыракан авиачаçăн истребителĕсем виçĕ кун хушшинче сывлăшри çапăçусенче противникăн 24 самолетне персе ÿкернĕ, 18 самолетне сиенленĕ. Чертов юлташăн подразделенийĕнчи штурмовиксем тата Петровец юлташăн подразделенийĕнчи летчиксем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 15 самолетне пĕтерсе тăкнă. Караченцев майор июлĕн 7-мĕшĕнче «Юнкерс-88» йышши 2 бомбардировщика персе ÿкернĕ.

* * *

Лейтенант И. И. Корольков, механик-водитель старши сержант С. И. Красноперов, оруди командирĕ кĕçĕн сержант П. М. Бондаренко тата радист-стрелок сержант Я. Ф. Симонов ларса çапăçакан танк вăрçă пуçланнăранпа нимĕçсен 17 танкне, 10 орудине, 22 минометне пĕтерсе тăкнă тата темиçе 100 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Красноармеец Степан Турков, танка хирĕç пемелли пăшалтан персе, нимĕçсен пĕр самолетне ÿкернĕ.

* * *

М. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен ушкăнĕ Белоруссири районсенчен пĕринче противникăн çар эшелонне крушени тунă. Эшелонри 53 вагонран 47 вагон йăлтах çĕмĕрĕлнĕ. Витебск облаçĕнчи партизансен К. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕçсен поездне ÿпĕнтерсе янă. 20 вагон тата бензин тултарнă 4 цистерна çунса кайнă. Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем 300 çын ытла пĕтнĕ.

* * *

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен икĕ отрячĕ нимĕç оккупанчĕсен карательнăй отрядне çапса аркатнă. Çапăçу вăхăтĕнче противникăн 39 салтакне пĕтерсе тăкнă. Партизансем нимĕçсенчен 2 оруди, 100 снаряд, 6 станковăй пулемет тата темиçе пин патрон тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 521-мĕш пехотнăй полкĕнчи 2-мĕш батальонран тыткăна парăннă унтер-офицер Генрих П. çапла каласа панă: «Юлашки çапăçусенче пирĕн батальон пысăк çухатусем тÿсрĕ. Улттăмĕш рота [illegible]на аркатса тăкнĕ. Вăл ротăра 3 кадровăй салтак та темиçе резервист çеç тăрса юлнă. Полкăн командирĕсем кĕске вăхăтрах виçĕ хутчен улшăнчĕç. 2-мĕш батальонра вара батальон командирĕсем 6 хутчен улшăннă. Батальонăн виçĕ командирне Бауэр майора, Шлин капитана тата Кауфман капитана çапăçусенче вĕлернĕ, икĕ командира командовани хăюсăр пулнăшăн вырăнтан кăларнă.

* * *

Югослави партизанĕсем çак кунсенче нимĕçсемпе итальянец оккупанчĕсен гарнизонĕсене питĕ кирлĕ чугунçул чинчи темиçе станцинчен хăваласа кăларнă. Çав чугунçулăн 80 километр тăршшĕ участокĕ партизансен аллинче тăрать. Партизансен отрячĕсем трофейăсем нумай тытса илнĕ.

ФРОНТРИ БОЕЦСЕНЕ—ĂШĂ ТУМТИРСЕМПЕ ПАРНЕСЕМ

КАЛИНИНО. Паттăр Хĕрлĕ Çар фашистла ирсĕрсене хирĕç отечественнăй аслă вăрçă туса пынă кунсенче пирĕн районри ĕççыннисем, Совет Союзĕнчи ĕççыннисем пекех, фронта пулăшас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Фронтри боецсем валли ăшă япаласемпе парнесем пухса парас ĕç çĕнĕрен анлăн саралса пырать.

Кăкшăмри «Ĕç ялавĕ» колхоз председателĕ Федотов юлташ колхозра Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем тата парнесем пухас ĕçе туса пырать. Колхоз 3 кĕске кĕрĕк, сурăх тирĕ, 3 мулаххай, 2 шаравар, 3 тÿшек çитти, 2 алшăлли, 3 кĕпе тата ытти япаласем пухса склада леçсе панă.

Туçи Мăратри «Клевер» колхозра 34 сурăх тирĕ, 19,4 килограмм çăм, 5,7 метр пир, 7 метр ситцă, 2 одеял, 2 кĕпе пухнă.

Çавăн пекех Ермошкинăри Калинин [иг]ĕпе тăракан колхоз членĕсем 27 килограмм çăм, 5 тир, Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем — 13 тир, 5 мăшăр алса, 13 метр пир, Хурн Кăкшăмри «Красноармеец» колхоз членĕсем — 18 тир, 12,5 килограмм çăм, Алгазинăри «Чăваш Коммуни» колхоз членĕсем — 17 тир, 5,1 килограмм çăм тата ытти япаласем чылай панă.

Анчах та районри хăшпĕр колхозсем ку ĕç çине çиелтен пăхаççĕ-ха.

Пур предприятисенче те, колхозсемпе учрежденисенче те ĕççыннисем хушшинче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласемпе парнесем пухас ĕçе тивĕçлипе организацилемелле.

Г. МАТВЕЕВ.

Шкул ачисен отрячĕсем çум çумлас ĕçре

ЭЛĔК. Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри хуласенчи çынсене тата хуласемпе ялсенчи вăтам тата туллимар вăтам шкулсенче вĕренекенсене çум çумлас тата утă çулса пуçтарас ĕçе мобилизацилесси çинчен йышăннă постановление Элĕкри вăтам шкулта вĕренекенсем сÿтсе-явреç. Кун хыççăн колхозсенче ĕçлеме ĕç отрячĕсем организацилерĕç.

Учительница Д. Ф. Сэйт юлташ ертсе пыракан отряд «Звезда» колхоза 10,8 гектар çинчи тырăсене çумкурăксенчен тасатса пачĕ. А. Артемьев, Татузов, Е. Сэйт пионерсем малтанхи кунах нормăна 150-шар процент тултарчĕç.

М. КУСТИКОВ

РЕСПУБЛИКĂН УЙХИРĔСЕНЧЕ

Çĕртме тăвас, çум çумлас тата ута çулас ĕçсем республикăра мĕнле пыраççĕ

Июлĕн 5-мĕш тĕлне республикăри колхозсем ирхи çĕртме сухине пурĕ 13.950 гектар çинче туса, плана 87 процент ытларах тултарнă. Ирхи çĕртме тăвас ĕçĕн срокĕ иртсе каять пулсан та, чылай районсенче ку ĕç вăраха юлса пырать. Çак иртнĕ пилĕк кун хушшинче, июлĕн 1-мĕшĕнчипе танлаштарсан, республика ирхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе 3,7 процент кăна ÿсĕм тунă, 2.434 гектар культиваци тунă.

Ирхи çĕртме тăвас ĕçре Улатăр, Пăрачкав, Кувакино районĕсем юлса пыраççĕ. Улатăр районĕ ирхи çĕртме тăвас плана мĕнпурĕ те 45 процент кăна тултарнă. Малта Етĕрне, Канаш, Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар районĕсем пыраççĕ. Вĕсем ирхи çĕртме планне паянхи куна ирттерсе пурнăçланă.

Тырăсене çум курăкĕсенчен тасатас ĕç тата ретсем хушшинче ĕçлесси республикăн чылай районĕсенче ăнăçлăн пулса пырать. Елчĕк районĕ июлĕн 5-мĕш тĕлне 17.872 гектар çинчи тырăсене, 1.192 гектар çинчи техникăллă культурăсене çум курăкĕсенчен тасатнă, Тăвай районĕ 23.727 гектар çинче çум çумланă, Калинински, Хĕрлĕ Чутай районĕсем çуракинче паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕç пулсан, ку ĕçре каярах юлса пыраççĕ. Йĕпреç районĕнчи колхозсем мĕнпурĕ те 2.358 гектар çинчи тырăсене çеç çум курăкĕсенчен тасатнă.

Йышлă выльăх-чĕрлĕх валли апатçимĕç хатĕрлес вăхăт пуçланчĕ. Чылай районсенчи колхозсем утă çулма массăллăн тухнă. Çак ответлă ĕçе тивĕçлĕ хак парса йĕркеллĕн туса ирттермелле. Çакна Вăрнар, Элĕк, Комсомольски тата ытти районсенчи колхозсен руководителĕсем тивĕçлипе ăнланса илнĕ. Элĕк районĕ улăх утине июлĕн 5-мĕш тĕлне 24 процент, Комсомольски район 22 процент, Вăрнар районĕ 37 процент çулнă.

Утă çулас ĕçе Шăмăршă, Кувакино, Пăрачкав, Вăрмар районĕсем ăнăçлăн туса пыраççĕ. Шăмăршă районĕ июлĕн 5-мĕш тĕлне çаран утине çулас плана 53 процент пурнăçланă. Анчах Вăрнар, Шупашкар, Советски, Шăхасан районĕсем утă çулас ĕçе 3-шер процент та тултарман-ха. Калинински район чылаях кая юлса пырать. Кунта улăх утине июлĕн 5-мĕш тĕлне мĕнпурĕ те 18 гектар çеç çулнă.

Утă çулас ĕçе тĕпренех хăвăртлатмалла. Уяр çанталăкпа туллин усă курса, выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ таранах паха çимĕç хатĕрлесе хăвармалла.

Канаш районĕ тырпула пухса кĕме çителĕксĕр хатĕрленет

Колхозсемпе ялсовет исполкомĕсен председателĕсен канашлăвĕ

КАНАШ, июлĕн 9-мĕш. («Чăваш Коммуни» корр.). Çак кунсенче Канаш районĕнчи колхозсемпе ялсовет исполкомĕсен председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу районри колхозсем тырăсене пухса кĕртес ĕçе хатĕрленни çинчен сÿтсе-яврĕ. Канашлура ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ пулчĕ.

Канашлу районри чылай колхозсем тырăсене пухса кĕртес ĕçе начар хатĕрленнине палăртрĕ. «Комбайн», Чапаев, Сталин ячĕпе тăракан колхозсем ку ĕçе ытла та начар туса пыраççĕ. «Красный путиловец», «Мотор», «2-ая пятилетка» колхозсем тырă вырма, авăн çапма, утă çулма машинăсемпе транспорт инвентарĕсене юсама тытăнман. Район утă çулмалли 46 машинăран 15-шне, тырă вырмалли 112 машинăран 59-шне, 14 лобогрейкăран 4-шне çеç юсанă. Çавăн пекех транспорт инвентарĕсене юсас, çĕнĕрен тăвас ĕç те районра çителĕксĕр пулса пырать. Витнĕ итемсемпе сушилкăсене тума тытăнман. 49 колхозран пĕри те çĕнĕ тырра йышăнма кĕлетсемпе амбарсем хатĕрлемен, 8 колхоз план та туман.

Районри машинно-тракторнăй станци те 14 комбайнран 4-шне çеç юсаса ĕçе кăларма хатĕрленĕ. МТС директорĕ Тимофеев, политотдел начальникĕ Кукушкин юлташсем «комбайнсене юсама машина пайĕсем çитмеççĕ», теççĕ. Канаш хулинче промышленность предприятисем те нумай, машинно-тракторнăй мастерской та пур пулсан та МТС руководителĕсем вĕсен пулăшăвĕпе усă курса комбайнсен запаслă пайĕсене вырăнтах туса хатĕрлес ĕçе организацилемен. Чылай колхозсен председателĕсем те «жнейкăсемпе косилкăсене юсама машинăсен пайĕсем çитмеççĕ», теççĕ. МТС вĕсене пулăшу парас ĕçе начар туса пырать. Колхозсен председателĕсем вара ун çине шанса лараççĕ.

Чарыков юлташ колхозсен тата ялсовет исполкомĕсен председателĕсене тырă вырса пухас тата çапса кĕртес ĕçсенче колхозниксемпе колхозницăсене большевикла ертсе пыма кирлине асăрхаттарчĕ. Колхозсенчи мĕнпур машинăсене, транспорт инвентарĕсене, ĕç хатĕрĕсене халех юсаса çитермелле. Ачаллă колхозницăсене ĕçлеме лайăх услови туса памалла. Кашни колхозрах яслисемпе площадкăсене халех уçмалла, вĕсем валли кирлĕ продуктсене çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хумалла.

Тырăсене вырса пухас ĕçĕн планне кашни колхозăнах тĕплĕн шухăшласа тумалла, тырăсем пулса пынă май суйласа вырас ĕçе лайăх организацилеме колхозсенче контрольнăй постсем тумалла. Тырă вырас хĕрÿ ĕç вăхăчĕ çитиччен иртнĕ çулхи тырра обязательство шучĕпе государствăна памалла. Ку ĕçе халĕ туни тырă вырнă вăхăтра ĕç вăйĕпе туллин усă курма, кĕлетсене çĕнĕ тырă кĕртмешкĕн вăхăтра тасатса хума майсем туса парать.

Тырăсене вырнă çĕрте машинăсене икĕ сменăпа пĕр чарăнусăр ĕçлеттермелле, колхозниксемпе колхозницăсен ĕçне учета илсе пырас ĕçре çирĕп йĕрке тумалла. Колхоз председателĕсен ĕçĕн пахалăхне сăнаса тăмалла, вырнă участоксене тĕрĕслесе тухмалла. Ĕç нормине тĕрĕс шутласа тухмалла, колхозниксемпе колхозницăсем ĕçе тухмасăр тăни ан пултăр.

Вăрçă вăхăтĕнче ăнăçлăн акса ÿстернĕ тырпула пĕр тăкаксăр вырса пуçтарас ĕçе большевикла тимлĕхпе туса ирттермелле.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухнă предприяти

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Совечĕ тата тивĕçлĕ Халăх Комиссариачĕсем промышленность работникĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулти июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Ăмăртура мала тухнă предприятисен шутĕнче пирĕн республикăри Бенский юлташ директор, Поддубко юлташ партбюро секретарĕ, Блошенко юлташ завком председателĕ пулса ĕçлекен предприяти пур.

Ăмăртура мала тухса пĕрремĕш премии илнĕ предприятие Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялав пама йышăннă.

Кунсăр пуçне, хутăш производствăсен предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕнче те çак завод малти вырăна тухнă. Çавăнпа та май уйăхĕнчи программăна тултарнăшăн илнĕ ялав, Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Совечĕн тата промышленноçăн пĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавĕ завод аллинчех юлать.

Çак мала тухнă предприятие премии пама палăртнă.

Июль уйăхĕнчи июнь уйăхĕнчинчен лайăхрах ĕçлер

КАНАШ, июлĕн 9-мĕш (**Телефонпа**). Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăннă промышленность предприятийĕсемпе промысла артелĕсем июнь уйăхĕнче унчченхинчен нумай хут лайăхрах ĕçлерĕç. Чылай предприятисем производство планне ирттерсе тултарчĕç.

Канашри типографи (директорĕ Д. Бык юлташ), хăйĕн производствăллă планне уйăхсеренех ирттерсе пурнăçласа пыраканскер, июнь уйăхĕнчи плана 185 процент тултарчĕ. Çапла, типографи коллективĕ 1942 çулăн иккĕмĕш кварталти планне 152,4 процент, çулталăкри ĕç планне 79,3 процент тултарчĕ. Типографире ĕçлекенсенчен Н. Николаевăпа М. Горбунова наборщицăсем, Т. Яковлевăпа А. Егорова тата О. Васильева печатницăсем пысăк тухăçлăн ĕçлеççĕ.

Ăмăртăва хутшăннă хыççăн индпошив мастерскойĕн коллективĕ те лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Мастерской хăйĕн июнь уйăхĕнчи планне 123 процент тултарчĕ, планран ирттерсе 2.300 тенкĕлĕх продукци çĕлесе кăларчĕ. Çĕвĕ çĕлекенсем: А. Елохина, М. Бахова юлташсем ĕç нормине 150-шар процент тултарса ĕçлеççĕ, О. Маркова, М. Рутте юлташсем 160—190 процент тултарса пыраççĕ.

Мастерскойĕн коллективĕ июль уйăхĕнче тата пысăкрах ĕç тухăçлăхĕ кăтартса ĕçлеме тăрăшать. Работницăсем хушшинче агитацилле ăнлантарулла ĕçе аван туса пыраççĕ. Малта пыракансен ĕç опытне пурне те ăнлантарса парса çĕклесе пыраççĕ. О. Маркова юлташ июлĕн 4-мĕшĕнче хăйĕн талăкри нормине 200 процент пурнăçларĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

Нимĕçсен наступленине сирсе яратпăр!

Вăрçă султалăкĕ хушшинче пирĕн халăх пиçĕхсе çитрĕ. Вăл кĕркунне чакни тĕрене хăсланĕ туйса илнĕ. Вăл хĕллехи çĕнтерӳсем хавасланĕ туйса илнĕ. Нимĕçсене çĕмĕрсе тăкма çăмăл маррине вăл ăнланнă, вăл нимĕçсене çĕмĕрме пултарнине те ăнланса илнĕ.

Пирĕн вăрçă çĕçсене пĕр ăнăçсăрлăх пулнă: нимĕçсен танкĕсем Вăтам Россин çеçен хирĕсене пырса кĕнĕ. Тăван çĕршыв çинче халăх хура пĕлĕтсем хăпарнă. Ростов, Калинин, Моздок патĕнче çĕнтерӳ тунă халăх хăйне иллюзисемпе лăплантарма шутламасть. Вăл хăрушлăха курса тăрать, çавăнпа вăл çапла калать: нимĕçсен наступленине сирсе яратпăр!

Хăрушлăх пысăк. Хура тăпраллă крайĕн пуян хирĕсем тыршуна сыппе лараççĕ. Нумаях та пулмасть пĕлĕ ту лараççĕ, пулнă вырăнне халĕ промышленноçпа çылăхĕ центрĕсем пулса тăнă. Юн тымарĕ пелех, чугунăн магистралĕ Мускава Ростовпа, Кавказ фронтне Хĕвелтухăç фронтĕпе çыхăнтарса тăрать. Тăшман тыршуна пĕтерсе тăвасшăн, заводсене пĕтерсе илесшĕн, çав юн тымарне касса татасшăн.

Нимĕç салтакĕсем хавасланаççĕ: вĕсен умĕнче таптаса пĕтермен хирсем, çунтарса яман ялсем, çаратса пĕтермен хуласем. Нĕкехуçсене хĕвелтухăçнелле шавлать: вĕсене выçлăх хистесе пырать. Тăмен шăпĕн пуянлăхĕ тултарма михĕсем хатĕрленĕ ĕнтĕ. Нимĕç наляйсем çĕнĕ вырăнсем хатĕрлеççĕ ĕнтĕ.

Эпир нимĕçсене каялла хăваласа яратпăр. Эпир вĕсене кĕрешӳллĕн чи хĕрӳллĕ уйăхсенче хăваласа ятăмăр. Ун чухне тăшман çăмăллăн тăрăн пулнă. Вăл хĕл çитессинчен шикленсе пынă. Халĕ вăл урăххи, вăл Донецри шахтăсене кăмăлтан пăхать. Хăйĕн чи лайăх вăйĕсене вăл ун чухне те кăларнă. Ун чухне тăшман малалла çитсе пыма шутланă. Халĕ ун чухне çинче ăна декабрьте çĕмĕрсе тăкнин çĕвви пур.

Иртнĕ кĕркунне пирĕн çине Гитлерăн кадровăй дивизийĕсем, Германи çарĕн чечекĕсем, çамрăк пуçкасакансем тапăнса килнĕччĕ. Вĕсем халĕ ... Халĕ пирĕн çине 40 султи çамрăксем, тĕрлĕ халăхсен тулли тарçисем килеççĕ. Эпир Гитлерăн пилĕк çулхи хайне çитереççĕ. Гитлер мĕн пур вăйне пуçтарса пирĕн çине ярать. Халĕ пирĕн нимĕçсене чарса тăмалла, унăн çĕнĕ чăрсăр тапăнăвне чарса лартмалла. Сук, пирĕн боецсем пирĕн вăрлăх варалама паманни. Сук, пирĕн боецсем Мускава çывхарма памĕç. Пирĕн нимĕçсене чарса лартмалла.

Гитлер сурхури наступлени тăвасшăн. Хăрасса ыттине боецсем нимĕçсен илшĕсене ярасса ĕнтĕ. Çапах тăшман хĕтĕлеккĕн Гитлерăн хăйĕн тăхăр уйăхне урăх турттса илнĕ. Гитлер тăвасшăн шутлама вĕçлĕ. Ирсĕр кĕркунне Гитлер ... пулать. Пирĕн нимĕçсене чарса лартмалла.

Гитлер вăхăтпа хăвăртлатса пыма хăтланать. Кашни кунах Англипе Америкăн çĕнĕ салтакĕсем килсе тăраççĕ. Кĕçех Германи çине нумай тĕрлĕ вĕçен кайăк вĕçсе каять. Иртнĕ кĕркунне Гитлер ... Америка уçă çар пулнă. Анчах ун чухне хăйĕн сурансемпе тăрпăлнă, Америка ун чухне нейтралитет çĕршыв пулнă. Халĕ Гитлер сурçĕмĕ чаран хăрушă ĕмĕтпе пурăнать, ... пирĕн союзниксен дивизийĕсем ... пирĕн çĕнтерӳ ... Саванăн Гитлер хумханать. Хăйĕн генералĕсене васкатать: часрах!

Нимĕçсем Ростовпа Калинин урокĕсене манса пулать. Вĕсене тата хăс лăрса пулать. Нимĕç танкĕсене каялла мĕн çавăркаламалла кăтартса парас пулать...

Иртнĕ кĕркунне пирĕн танксем нимĕçсенниччен нумай сахалрах пулнă. Нимĕç бомбардировщикĕсем ун чухне пирĕн пĕлĕтре ирĕклĕн вĕçсе çӳренĕ. Нимĕç автоматчикĕсем сăтăрлантараççĕ. Халĕ апла мар. Паллах ĕнтĕ, ытларах танксем кирлĕ. Паллах ĕнтĕ, ... Эпир пĕрес тесе тăшман танкĕсем пухса хатĕрленĕ. Анчах паха танксем пирĕн сахалли-ха? Вĕсен брони нимĕçсеннинчен çирĕпрех. Боец-пусăмсем, вырăссен чĕри нимĕç чĕринчен çирĕпреххине кăтартса парăр! Халĕ нимĕçсем, интервентсем бомбардировщиксемпе ... Халĕ пирĕн автоматсем, танкĕсем ... нимĕç тапса сирпĕтме çапла вăй-хал ... мачĕ пур. Эпир автоматсем, миномет ... Хальĕ тата ... çирĕпрех пулас пулать.

Иртнĕ кĕркунне боецсем тумланма хатĕрленнĕ. Вĕсен умĕнче çак тĕллев: нимĕçсене чарса лартмалла. Вĕсем Гитлеровецсене этемсем тесе шутланă. Халĕ вара чăн-чăнах çак çынсем мар. Эпир Волоколамски шоссе ... куртăмăр. Эпир Истра хулине ... курнă. Эпир ... вилнĕ çынсене ... тата касса вакланă ачасене куртăмăр.

Каллех хăрушă кунсем килсе çитрĕç. Кун вăл нимĕçсен сив чунĕ тĕпĕр хут пуçланнине пĕлтерет. Анчах ку хутĕнче вăл пĕлмен. Эпир, малтанхине тӳсме ирттернĕ. Пирĕн ... кушăрпа кăвăсăм ... пусса, эпир ăна çапса хăваланă. Эпир вăрăнма ан вара пĕлтерне пĕр хăраврăй боец пĕтĕм ... вăхăт хăваса пуçлама пултарать. Хăраса ... пĕрне пăтра ... ту ... хума пултарать. Нимĕç хăй умĕнче ... тухма сук стена курса тăрать: ку вăл пирĕн çар. Нимĕç çав стенари ... выратак пырать. Вăл ... тухăсшăн. Эпир ăна ... тата ... урăх ... кунсенче ... вилнĕ кайăксен ... яратпăр.

Пур фронтсенче те çак сунатлă сăмахсем вĕçсе çӳреç: «Тăвасс... пулĕшăм!». Çапăçу пĕр-пĕр хулашăн мар—Ростовшăн, Воронежшăн мар—Россишĕн пулать. Эпир вăл çине Гитлер калавне пиленĕ. Хăвăрах ... нимĕçе хăваласа ятăр, вăл ун чухне ... Мускав патнех пырса çитнĕччĕ. Халĕ ... Хăваласа ярăр ăна халĕ те! Нимĕçсене Дон патĕнче хăваласа ярăр! Çапăçу хыççăн çапăçу ... пырать-ха, анчах çакăн пек çирĕп сасă илтĕнет:

Нимĕçсене каялла хăваласа яратпăр!

Илья ЭРЕНБУРГ.

(«Красная звезда», июлĕн 8-мĕш.).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Совет органĕсенчи парти группиÑен ĕçĕсем çинчен

Советсен, профсоюзсен, кооперативсен тата ытти массăллă организацисен суйланнă органĕсенчи парти групписем умне ВКП(б) Уставĕ çакăн пек задачăсем лартать: парти влиянине тата унăн политикине пурнăçа кĕртес ĕçе партире тăманнисем хушшинче пур енчен те вăйлатмалла, партипе государствăн дисциплинине çирĕплетмелле, бюрократизма хирĕç кĕрешмелле, партипе советсен кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тăмалла. Çак задачăсене халĕ, вăрçă вăхăтĕнче, парти групписен уйрăмах тĕплĕн, тимлĕн тата вăхăтра пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшас пулать.

Ĕççынни депутачĕсен Сĕнтĕрвăрри районĕнчи совечĕн исполкомĕ çумĕнчи парти группи хăйĕн ĕçне устав хушнă пек туса пырать. Парти группин ларăвĕсем йĕркеллĕ пулса пыраççĕ, вăл партипе советсен кăтартăвĕсене çиийĕнчех учрежденисен руководителĕсем патне çитерет, вĕсене вăхăтра пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе пырать. Райсовет исполкомĕнче дисциплина çирĕп, ĕççыннисен заявленийĕсемпе жалобисене вăхăтра пăхса тухса ĕçе татса пама тăрăшаççĕ.

Çав вăхăтрах Сĕнтĕрвăрри хула совечĕн исполкомĕ çумĕнчи парти группи начар ĕçлет. Партгруппа секретарĕ Жирнов юлташ унăн ĕçĕ çине çавăрăнса пăхмасть. Группа ларăвĕ 1941 çулти февраль уйăхĕнчен пе те пулман. Партгруппăра хула совечĕн депутачĕсем-коммунистсем 12 çын тăраççĕ. Анчах вĕсене Жирнов юлташ партипе советсен решенийĕсене пурнăçа кĕртес ĕçе начар хутшăнтарать. ВКП(б) райкомĕн 12 постановленине партгруппа пăхса тухман, пурнăçа кĕртмен. Хула совечĕн исполкомне çĕнĕрен ĕçе илнĕ çынсене пулăшса пыни çук, çуртйĕр управленинче ĕçлеме работниксем тупса лартма тăрăшман. Хулари мунча тата электростанци япăх ĕçлеççĕ, вĕсен ĕçне лайăхлатасси çинчен партгруппа сӳтсе-явман, вĕсен ĕçне йĕркелеме кирлĕ мерăсене йышăнман.

Партгруппа ĕçлеменни ялхуçалăх ĕçĕсенче те сисĕнет. Хулари колхоз начар ĕçлет. Унта выльăхсем вилни пулнă, 55 çемье хурт-хăмăр вилсе пĕтнĕ. Апкакай, сĕт-çу тата ытти ялхуçалăх продукчĕсене государствăна тăратас ĕç çителĕксĕр пулса пырать.

Хула совечĕн исполкомĕнчи парти группин ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕ юлашки вăхăтра кăна çавăрăнса пăхрĕ. Кун хыççăн кăна хула совет исполкомĕн ĕçĕнче улшăнусем тулчĕç. Колхоз тĕштырăсене акса пĕтерчĕ, мунча йĕркеллĕ ĕçлеме пуçларĕ.

Çакăнтан ĕнтĕ парти групписен ĕçĕсем çине ВКП(б) райкомĕсен ытларах çавăрăнса пăхма кирли курăнать.

С. ПЕТРОВ.

Ют çĕршывсенче

Египетри çапăçусем

ЛОНДОН, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: йышлă çапăçусем пулса иртнĕ хыççăн халь 8-мĕш çар пуçарулăха хăйĕн аллине çавăрса илнĕ, вăл Эл-Аламейн патĕнчи позицисенчен хĕвеланăçнерехри вырăнсенче противника хирĕç пĕр тăтăш çапăçать. Противник çав районра шăтарса кĕме хăтланнисене пурне те сирсе янă. Германи войскисене пĕр минута та канăç памаççĕ. Юлашки икĕ кун хушшинче 8-мĕш çар Эль-Аламейнран кăнтăртарахри лутрарах вырăна противникран тасатнă та унăн кăнтăр вĕçĕнчи çирĕплетнĕ паха точкине йышăнса илнĕ. Тăшман хĕвелтухăçнелле хаяррăн çапăçса кĕрсе пынине, çапла, сирсе янă, унăн халь майĕпен хĕвеланăçнелле чакса пыма тивет. Çапăçу пĕтмен-ха. 8-мĕш çар пĕр чарăнмасăр подкрепленисем илсе тăрать.

ГИТЛЕРЛА АВИАЦИН ЕГИПЕТРИ ВАРВАРЛА ĔÇĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн медицина работникĕсем çапла каласа параççĕ: иртнĕ эрнере Англи войскисем Эль-Аламейнран чакнă чухне нимĕç самолечĕсем вĕçĕмсĕр чăма-чăма Хĕрлĕ Хĕрес организацин лавĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ИТАЛИРИ ФАШИЗМА ХИРĔÇ ПЫРАКАН КĔРЕШУ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). Америкăра тухакан хаçатсем каланă тăрăх, Италире фашизма хирĕç кĕрешекен темиçе организаци пур. Италире икĕ хаçат пĕр чарăнмасăр вăрттăн тухса тăраççĕ.

Çар валли ĕçлекен фабрикăсемпе заводсенче саботажла ĕçсем кунсеренех ӳссе пыраççĕ. Нумаях пулмасть Аостăри машинăсем тăвакан заводра такам электрокабеле пăснă, вара заводра пĕтĕм ĕç чарăнса ларнă. Падуăра икĕ завод çунса кайнă. Неапольри доксенче 2 эсминеца сиенленĕ. Фиат завочĕсенче кашни уйăхрах хатĕрленĕ моторсенчен чĕрĕкĕ брака каять.

Италири халăх фашистсен ĕçĕсене хирĕç тăнине Италире тухакан хаçатсем те пытарса тăма пултараймаççĕ. Туринра тухакан «Гадзета дель Пополо» хаçат нумаях пулмасть çапла пĕлтернĕччĕ: Бари хулинче войскăсем валли çăкăр пĕçерсе тăракан заводри рабочисен пĕр ушкăнĕ нумай çăнăха юри пăснă.

Итали хресченĕсем гитлерла çар валли ялхуçалăх продукчĕсем тăратассине пĕтере-пĕтере хураççĕ. Яллă кăшпĕр вырăнсенче нумаях пулмасть тырă пăлхавĕсем пулса иртнĕ.

ТУРЦИ РЕСПУБЛИКИН ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔ АРЕФИК САЙДАМ ВИЛНĔ

АНКАРА, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). Анатоли агентстви çапла пĕлтерет: июлĕн 8-мĕш ыран тенĕ чухне çĕрле Турци министрĕсен совечĕн председателĕ Арефик Сайдам вилнĕ. Вăл юн тымарĕсем питĕрĕнсе ларнипе вилнĕ.

* * *

Сайдам 1881 çулта Стамбулра çуралнă. Хайĕн специальноçĕ тăрăх вăл врач-терапевт пулнă. Медицина наукисене ют çĕршывсенче вĕреннĕ. 1914—1918 çулхи вăрçăччен вăл Хĕвелтухăçĕнчи çарăн санитари инспекторĕ пулса ĕçленĕ, вăрçă вăхăтĕнче тата вăрçă хыççăн врач пулса ĕçленĕ.

1929 çулта Сайдама сывлăх сыхлав министрĕ вырăнне лартнă, вăл çав вырăнта темиçе кабинет вăхăтĕнче ĕçленĕ. Джелал Байяра кабинетĕнче Сайдам шалти ĕçсен министрĕ пулнă. Премьер-министр вырăнне ăна 1939 çулти январьте лартнă.

Сайдам Турцири нациллĕ юхăмăн деятелĕ пулнă, вăл меджлисăн пĕрремĕш пухăвĕ хыççăн ялан унăн членĕ пулнă. Унсăр пуçне вăл Турцин наукăпа географи обществин хисеплĕ председателĕ пулнă.

ТУЗЕРА ТУРЦИН ВĂХĂТЛĂХ ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔ ТУСА ЛАРТНĂ

АНКАРА, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). Анатоли агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Турци премьер-министрĕн ĕçĕсене вăхăтлăха туса пыракан пулма шалти ĕçсен хальхи министрне Ахмед Фикри Тузера лартнă.

1939 çултан пуçласа 1942 çулти май уйăхĕччен Тузер народнăй-республикански партин генеральнăй секретарĕ пулнă. 1942 çулти май уйăхĕнче Тузер кабинетăн членĕ пулса тăнă, унта вăл шалти ĕçсен министрĕ пулнă.

АНГЛИРИ ОБЩЕСТВĂЛЛĂ ДЕЯТЕЛЬСЕМ ИНДИПЕ ÇĔНĔРЕН КАЛАÇУ ПУÇЛАСА ЯМА ЫЙТАÇÇĔ

ЛОНДОН, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). Либералсемпе лейбористсен — парламент членĕсен — пĕр ушкăнĕ тата ытти паллă деятельсем, вăл шутра Ласки профессор тата Кентерберински соборăн настоятелĕ те, Инди ыйтăвне татса памашкăн калаçу пуçласа яма ыйтса правительствăна петици çырса панă. Петицире çапла каланă: Индин халăхи ларурăвĕ Индин никама пăхăнманлăхĕшĕн те, пĕрлешнĕ нацисен кĕрешĕвĕшĕн те хăрушă пулса тăрать. Петици çырнă çынсем Англи правительствинчен Индири политикăллă юхăмсен руководителĕсене индиецсене хăйсен никама пăхăнманлăхĕшĕн кирлĕ таран контроль прави парасси çинчен сӳтсе явма сĕнме тата нациллĕ правительствăн членĕсен составĕ тĕлĕшпе сĕнӳсем тăратма ыйтаççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Пирĕн землякс ем

Николай Риков

Вăл вĕçме çуралнă. Тăван амăшĕ ăна ĕмĕрлĕхех хăюллă та паттăр чĕре пехилленĕ. Тăван çĕршыв ăмăрт-кайăкĕн пек хăватлă çунатсем панă.

— Вĕç, ывăлăм, инçете çит! Пин тĕрлĕ кайăксем вĕçекен тӳпере чи хăюлли пул. Çăхана тĕл пулсан — çиçĕм пул. Тĕкĕ вĕçтĕр çĕханăн, пĕттĕр çăхан. Хупек сокола тĕл пулсан — ырă сунса саламла. Соколăн чĕри çĕклентĕр. Çапăçу хирĕнче аманнă юлташна ан пăрах. Хăюллине — вут витмен, хĕравçăна — хур тивнĕ. Хăравçă вилет, хăюлли çĕнтерет.

Николай Рикова илемлетекен сăмахсем кирлĕ мар. Вăл хăйĕн паттăр ĕçĕсемпе хăйне хăех илемлетет.

Революци уçса панă çулпа вăл, пирĕн чăваш халăхĕн пиншер ывăл-хĕрĕсемпе пĕрле, пирĕн çĕршыври миллионшар çамрăксемпе пĕрле, умри çутă та аслă телей патне утнă. Вăл Октябрьти революцирен пĕр çул çеç малтан çуралнă. Анчах пурнăçĕ унăн çамрăк совет çĕршывĕпе пĕрлех çитĕнсе пынă. Вăрмар районĕнчи Кивĕ Мăнтăр ялĕнче вăл букварь тăрăх малтанхи саспаллисемпе паллашнă. Тепĕр 12 çултан вăл тăван ялне учитель пулса таврăннă.

Паян вăл — воин. Паян хаçатра тухнă сăн-ӳкерчĕкĕ çине пăхса, ăна унпа пĕрле Канаш педтехникумĕнче вĕреннĕ тусĕсем, вăл нумаях та пулмасть хăй вĕрентнĕ ачасем, тăванĕсемпе пĕлĕшĕсем палласа илеççĕ. Кашнин чĕринче лайăх асаилӳсем вăранаççĕ. «Маттур та шухăрах йĕкĕтчĕ» теççĕ вĕсем.

1937 çулта тăван çĕршыв ăна Хĕрлĕ Çар ретне чĕнсе илнĕренпе вăл тăтăшах çартa. Малтан — танкист. Унтан... Вăл вĕçме çуралнă-çке-ха! Хăюллă чĕре сенкер тӳпен вĕçĕ-хĕррисĕр аслă океанĕ патнеллех туртăннă. Çав çулсенче Чкаловăн, Громовăн, Коккинакин геройла ĕçĕсене пĕтĕм тĕнче саламласа алă çупнă. Çав çулсенче Николай Риков хăй пурнăçĕн чăн-чăн тупсăмне, хăйĕн стихийине тупать. 1940 çулта вăл летчиксен шкулĕнчен вĕренсе тухса, сталинла авиацин хăюллă соколĕ пулса тăрать.

...Июнь уйăхĕн пĕр лăпкă ирĕнче пирĕн çĕршывăн лăпкăн та хăватлăн янăракан ĕç симфонине бомбăсем шартлатса çурăлнă сасăсем пăсаççĕ. Тăван çĕршыв çине чугун çамкаллă, ултавлă та сĕмсĕр тăшман тапăнса кĕнĕ. В. М. Молотов юлташ Совет Правительстви ячĕпе, çуллăç Сталин ячĕпе пĕтĕм халăха отечественнăй аслă вăрçа çĕкленме чĕнет.

Лейтенант Николай Риков аэродром çинче. Вĕсем — 12 истребитель — фашистсен 40 çăханне хирĕç малтанхи çапăçăва çĕкленеççĕ.

— Çӳçенмелленччĕ ун чухне, — аса илет халĕ Риков. — Вĕри çурăм тăрăх пăрлă шыв сапнă пек туйăнатчĕ. Анчах ку туйăм часах сирĕлчĕ. Хаярлăх, ĕмĕр çӳрĕлми хăватлă хаярлăх çулăмĕ хыпса илчĕ чĕрене.

Фашистсемпе малтанхи çапăçурах кĕскен ĕç татнă. 40 самолетран 17 самолетне вĕсем çапса ӳкернĕ.

Малтанхи çапăçу чĕрене хăюлăх кӳнĕ, алăсем çирĕпленнĕ, вĕсем самолетпа хĕçпăшалпа çирĕпленрех тыткаланă. Иртнĕ çулталăк çапăçу çулĕмĕпе тулса тăрать. Паттăр вĕçевçĕн биографине шăратнă хурçă пек цифрăсем çуталса кĕреççĕ.

Николай Риков 199 хут боевой вĕçеве тухнă. Сывлăшри çапăçусенче 84 хутчен пулнă. Çак шута чи паллăраххисем кăна кĕреççĕ. Тăшманăн 7 самолетне çапса ӳкернĕ. Кашни çапăçура вилĕмпе куçа-куçăн тăнă. Вилĕм çине тӳрремĕн вĕçе-вĕçе пынă, вилĕм çиçĕм пек хăюлăх умĕнче тӳссе тăрайман, кашнинчех пăрăннă. Летчик вилĕме хăвалана, çапа-çапа ӳкернĕ. Виçĕ хутчен Риков вăйлă аманнă, унăн ӳчĕ çинче 28 суран пулнă. Анчах паттăрăн çамрăк организмĕ нимĕнле сурана та парăнман. Вăл часах хăйĕн çиййĕнчи бинтсене сӳсе пăрахса, татах çил-çунатлă самолет çине ларнă. Госпитальрен вăхăтсăр туха-туха кайнăшăн ăна аслăрах командирсем хătăрнă, анчах паттăр летчик строя таврăннишĕн вĕсем савăннă.

— Командир юлташ, выртма пултараймастăп. Госпитальре — пăчă, уçăлма каяс тетĕп, — рапортланă вăл куллине тытаймасăр.

Риков летчикăн çапăçури пурнăçĕ нумай енлĕ. Вăл — штурман, истребитель, бомбардировщик, разведчик, штурмовик. Çавăнпа та унăн çапăçăвĕсем те нумай тĕрлĕ.

Пĕрринче вăл хăйĕн командирĕпе пĕрле — иккĕн икĕ самолетпа разведкăра пулнă.

Чылай ăнăçлăн вĕçсе çӳренĕ хыççăн, вĕсем тăшманăн 9 самолечĕпе тĕл пулнă.

— Эпĕ вĕсене атакăлатăп, эсĕ мана флангран хӳтĕлесе пыр,—тесе приказ панă командир. Командир тăшман çăханĕсен ушкăнĕ çине вăркăннă. Риков, хушнă пекех, ăна хӳтĕлесе пынă. Часах командир икĕ çăхана персе антарнă та ыттисем çине ывтăннă.

— Мĕнле-ха капла? Вăл иккĕшне персе антарчĕ. Эпĕ... Эпĕ нимĕн те тăваймарăм,—тенĕ хăй ăшĕнче Риков, кăмăлĕ хускалнă унăн. Вара вăл текех тӳссе тăрайман, атакăна ывтăннă. Вăл фашистсен икĕ самолетне çĕрелле тăрăнтарнă. Анчах... çĕр çине ансан, командир ăна приказа «пăхăнманшăн» хăтăрса илнĕ.

Разведчикăн час-часах пĕччен вĕçме лекет. Пĕринче разведкăран таврăннă чухне ун çине 3 «Юнкерс» тата 4 «Мессершмитт» тапăннă.

— Фашистсем ушкăнпа пĕччен самолета тапăннă чухне «паттăр» вара,—тет Риков.

Рикова фашистсем йĕри-таврах çавăрса илнĕ. Умра та, хыçра та, сулахайра та, сылтăмра та, аялта та, çӳлте те—тăшман. Йывăр лару-тăру. Фашистсем тем шут тăваççĕ пулас. Пемеççĕ. Риков та шарламасть. Вăл хăйĕн машинине фашистсен машинисемпе пĕр виçере тытса пыма тăрăшать. Капла вĕсем, хăйсен самолетне лектересрен шикленсе, перейместĕç. Анчах нервсем... Ой, çирĕп нервсем кирлĕ йĕри-тавра тăшмансем пынă чухне.

Унтан фашистсен малта пыракан машини çавăрăнса илет те Риковăн самолетне çамкаран атакăлама шутлать. Риков çухалса каймасть. Вăл хăйĕн самолетне фашиста хирĕçех тытать. Вăрăм черет. Çăхан сăмсипе çĕрелле тăрăнать. Унтан Риков мĕнпур пулеметсем çине пусать те машинине çурта пек çӳлелле тытса, тăшмансен ункинчен çиçĕм пек тухса вăркăнать. Фашистсем мĕн пулса иртнине тавçăрса та илеймеççĕ. Летчик разведкăра тупнă паха сведенисене ăнăçлăн илсе таврăнать те кĕске рапорт парать...

Тепĕр çапăçура Риковăн самолетне фашистсем вут хыптарнă. Пĕтесрен хăраса ӳкнĕ пулсан, çунакан самолета пăрахса, летчик парашютпа сикнĕ пулĕччĕ. Сикнĕ пулĕччĕ те... Пĕтнĕ пулĕччĕ. Тăван çĕршыв ывăлĕн, хастар комсомолецăн тăшман йышăннă территори çине анасси килмен. Вăл çунакан самолетпа 120 километр вĕçсе килсе, хамăрăн территори çине ларнă. Ларнă чухне самолетăн çунатти çунса хуçăлса ӳкнĕ пулсан та, тăван совет çĕрĕ ăна çемçен йышăннă.

Кусем вĕсем боевой летчикăн кулленхи пурнăçĕнчи эпизодсем. Кашни эпизодран юрă хывма пулать, мĕнпурне пĕрле пухсан, тĕлĕнмелле поэма пулать. Николай Риков халь çав поэмăна малалла çырать.

Вăл, 25 çулти комсомолец, малтанхи çапăçăва лейтенант пулса кĕнĕ. Халĕ вăл авиаци майорĕ. Унăн кăкăрне Хĕрлĕ Ялав орденĕпе Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ тата «За отвагу» медаль илемлетеççĕ. Вăл хăйĕн яштака та çӳллĕ пӳ-сийĕпе, хăйĕн çамрăк та таса сăн-сăпачĕпе, хăйĕн геройла ĕçĕсемпе чăваш халăхĕн сăн-сăпатне илемлетет, тăван çĕршывăн чапне ӳстерет.

Татах та хăюллăнрах вĕç эс, вĕçме çуралнă паттăр! Аркат, пĕтер ирсĕр фашистсене!

А. ЭСХЕЛЬ.

АЛАТЫРСКАЯ ШКОЛА МЕДСЕСТЕР объявляет прием учащихся на 1942—43 учебный год.

Срок обучения 1 год.

В школу принимаются лица в возрасте от 15 до 35 лет с образованием 7 классов неполной средней школы.

Окончившие в 1941 и 42 годах неполную среднюю школу и 8, 9, 10 классы средней школы принимаются без испытаний.

Остальные поступающие подвергаются испытаниям по русскому языку и литературе, математике и Конституции СССР.

Приемные испытания с 25 по 30 августа.

Заявления подаются на имя директора школы с приложением документов: 1) об образовании, 2) свидетельства о рождении, 3) справки о здоровьи и 4) 2 фотокарточек.

Адрес: г. Алатырь, ул. Ленина, № 8.
2—1

ГОСУДАРСТВЕННОМУ СОЮЗНОМУ ТРЕСТУ требуются на постоянную работу: инженеры-строители, техники-строители, десятники, агенты, завскладами, кладовщики, плотники, бетонщики, арматурщики, каменщики, слесаря, автослесаря, монтеры, разнорабочие, шоферы, маляры, штукатуры.

Обеспечиваются общежитием, обедом и ужином.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Володарского, д. 5 (Дом Печати), 2-й этаж, комн. 15, отдел кадров.

ТРЕБУЮТСЯ для работы в Чебоксарах: главный бухгалтер, бухгалтер-ревизор, инженер по деревообработке, инженер-экономист, статистик, завхоз, юрис-консульт и машинистка.

Для работы в районах: старшие бухгалтера и бухгалтера.

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, дом № 36, Главлесосбыт.
2—1

МАКАРОННОЙ ФАБРИКЕ срочно требуются на работу: механик, бухгалтер расчетного отдела, плановик-экономист, кочегары, слесаря и рабочие в цеха.

Обращаться по адресу: ул. Урицкого, № 29.

ЧЕБОКСАРСКОМУ ЛИКЕРО-ВОДОЧНОМУ ЗАВОДУ требуются на постоянную работу: автомеханик, шофер, тракторист, конюх, грузчики на автомашины (3), грузчики на берегу Волги (5).

С предложением обращаться: гор. Чебоксары, Чувашская улица, ликеро-водочный завод.
3—3

КАЗАНСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ ИМЕНИ МАКСИМА ГОРЬКОГО объявляет преим студентов на 1942—43 учебный год.

Срок обучения в институте — 3 года.

Условия приема в институт — общие для всех вузов.

Институт готовит агрономов высшей квалификации. Преподавание в институте ведут опытные профессоры и доценты.

Во время войны Казанский сельскохозяйственный институт размещается на территории своего учебного хозяйства, в живописной местности у озера Кабан, на ферме № 2, вблизи гор. Казани. Между институтом и городом существует автобусная связь.

Учебное хозяйство располагает полевыми посевами, огородом, садом, ягодником, пасекой и высокопродуктивным животноводством.

Студенты института обеспечиваются дешевым питанием и общежитием.

Заявления о приеме в институт принимаются с 1-го июля по 31 июля 1942 года по адресу: гор. Казань, п/о II, ферма № 2, Сельскохозяйственный институт, директору.

Городское отделение приемной комиссии: гор. Казань, ул. Жданова, д. № 47, комн. 14.

К заявлению прилагаются подлинный документ о среднем образовании, автобиография и 3 фотокарточки.

2—2 ДИРЕКЦИЯ.

ЧЕБОКСАРСКАЯ ФАРМАЦЕВТИЧЕСКАЯ ШКОЛА НАРКОМЗДРАВА РСФСР объявляет набор учащихся на 1942—43 учебный год.

Школа готовит помощников провизора.

Срок обучения 3 года.

В школу принимаются лица обоего пола в возрасте от 15 до 35 лет, имеющие образование в об'еме 7 классов средней школы или приравненных к ним других учебных заведений без приемных испытаний.

Прием заявлений о зачислении производится с 20 июня по 20 августа.

Заявление подается на имя директора с приложением следующих документов (в подлиннике): а) свидетельство об образовании, б) свидетельство о рождении, в) справка о здоровьи, г) две фотокарточки с собственноручной подписью на них, д) паспорт пред'является лично.

Начало занятий с 1 сентября.

Заявления и запросы с приложением марок на 60 коп. подавать по адресу: гор. Чебоксары, Чувашской АССР, ул. Чувашская, № 15.

ДИРЕКЦИЯ.

ЦИВИЛЬСКАЯ ФЕЛЬДШЕРСКАЯ ШКОЛА НКЗ ЧУВАШСКОЙ АССР объявляет прием учащихся на 1942—43 учебный год НА ФЕЛЬДШЕРСКОЕ ОТДЕЛЕНИЕ.

В школу принимаются граждане в возрасте от 15 до 35 лет с образованием не ниже семи лет.

Поступающие принимаются без испытаний.

Прием заявлений с 1 июня по 15 августа.

Зачисление в число учащихся производится с 20 по 25 августа.

Начало занятий с 1 сентября.

Заявления подаются на имя директора фельдшерской школы с приложением следующих документов: свидетельства об образовании, свидетельства о рождении, справки о состоянии здоровья, трех заверенных фотокарточек. Паспорт предъявляется лично.

Стипендия назначается отличникам семилетки и инвалидам отечественной войны.

Принятые в школу обеспечиваются общежитием.

Для ответа к документам должна быть приложена марка в 30 копеек.

Адрес: гор. Цивильск, Б-Советская, 64, 15 Фельдшерская школа.

3—2 ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, комсомол пурнăç пайĕн — 0—25, издательство конторин — 0—23.

ИТ 544 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64